## Çамрăк техниксем

Тимур, Якур тата Атнер уроксем хыççăн çамрăк конструкторсен кружокне юлчĕç, юратнă ĕçе кĕлĕнчĕç. Пĕри мăлатукпа шăк-шак шаккать, тепри ăйăпа кăпăртик-капăртик вылятать, виççĕмĕшĕ станока кăлтăр-кăлтăр çавăрттарать.

Нумай-и, сахал-и тăрăшрĕç вĕсем, виççĕшĕ виçĕ тĕрлĕ карап модельне ăсталарĕç.

– Тинĕс карапĕ,– паллаштарчĕ ыттисене Тимур. – Тĕнче картти çинче Тутар проливĕ пур. Манăн, тутар ачин, унта çитсе курмаллах.

– Эпĕ космос карапĕ ăсталатăп, мĕншĕн тесен уăлăха чи малтан çĕкленекенĕ вырăс çынни пулнă. Манăн аслă пичче те пилот,– хăй ĕçне кăтартрĕ Якур, вырăс ачи.

Атнер те тавлашăва кĕчĕ. Чăваш ачи ыттисенчен мĕнрен кая!

– Чăваш çынни те уçлăхра вĕçнĕ. Анчах эпĕ çĕр çинчех çĕнĕ ăул уçасшăн. Хир карапĕ пуринчен те кирлĕрехчи. Моряк та, пилот та çăкăрсăр пурăнаймĕç. Чăвашсем сĕм авалтанпах çĕр ĕçĕпе пурăннă. Манăн атте те ял хуçалăхĕнче тăрăшать. Çавăнпа эпĕ комбайн модельне ăсталарăм,– терĕ вăл хастарланса.

Тавлашу хĕрĕленчĕ. Ачасем виççĕн тан ăмăртмалла камăн карапĕ лайăхраххине ĕнентерме пикенчĕç.

– Тинĕс карапĕн кашни деталĕ шанчăклă пулмалла, унсăрăн тинĕсре ишеймĕн,– палăртрĕ Тимур.

– Чи вичкĕн ăслă конструкторсем çеç вĕçев аппаратне тума пултараççĕ,– асăрхаттарчĕ Егор.

– Пĕрчĕшерĕн тырă пухакан механизмăн та кашни хусканăвĕ вырăнлă пулмалла,– парăнмасть Атнер.

Тавлашакансем патне кружок ертĕçи пычĕ.

– Пĕлетĕр-и, тĕнчере пуринчен те ăста конструктор – çут çанталăк. Тем тĕрлĕ тĕлĕнтермĕш те, йывăрлăх та кăтартсть вăл пире,– ăнлантарчĕ Юрий Иванович.– Çĕрпе тӳпе хушши хĕвеллĕ те, тĕтреллĕ те, тапхăр-тапхăр тăвăллă та... Ура пусмассерен пуç ватмăш – хăш чухне вĕçне-хĕрне тухма çук. Çут çанталăкра пурăнма юрăхлă вырăн тупас тесен çыннăн вун-вун тĕрлĕ карап, çĕр-çĕр тĕрлĕ çĕрев аппарачĕ хатĕрлеме тивет. Çĕр çинче те, тĕпере те, шывра та шанчăклă çул хывсан кăна этемлĕх аслă тĕнчепе килĕшĕ тупма пултарать.

Вĕрентекене итленĕ май ачасем ăнланчĕç: кашнин моделĕ пурнăçра кирлĕ. Виçĕ карапăн пĕр тĕллеве пĕрлешсе тĕрлĕ халăх ачисене аслă çула илсе тухмалла. Чăвашĕ те, вырăсĕ те, тутарĕ те, ыттисем те пĕр-пĕрне ялан ăнланччăр тата туслă пурăнччăр.

*Ишентей, Н. Çамрăк техниксем : [калав] / Н. Ишентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 412-413.*